**Апрелĕн 7-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери сывлăх кунĕ**

# Ĕмĕр вăрăм пултăр



***Сывлăх çыншăн çав тери хаклă. Чăнахах та паха пулнине вара каярах ăнланса илетпĕр. Вăл е ку чир хавшатма пуçласан медицина ĕçченĕсем патне çул тытатпăр. Шурă халатлисен тăрăшулăхĕпе каллех сывалса ура çине тăратпăр.***

***Районти тĕп больницăна çитсен ырă улшăнусене асăрхама пулать. Çĕнĕ йышши оборудованисем, "Васкавлă пулăшу" машинисем тата ыттисем те. Çакăнта вара чи малтанах "Сывлăх" наци проекчĕн ырă витĕмлĕхне палăртмалла пулĕ. Халăх сывлăхне сыхласси мĕнле шайра тата вилнисен, çуралакансен йышĕ еплерех пулни пирки эпĕ районти тĕп больницăн тĕп врачĕнчен, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутатĕнчен В.Г. ДАНИЛОВРАН тĕплĕн каласа пама ыйтрăм.***

– Медицина ĕçне-хĕлне пĕр сăмахпа пĕтĕмлетсе калама çук. Куçа курăнман ĕç нумай сывлăха сыхлас ĕçре. Çапах та эпир пурнăç уттипе тан пыма тăрăшатпăр. Хамăр ума лартнă тĕп тĕллеве туллин пурнăçласси çине çивĕччĕн пăхатпăр. Медицина ĕçченĕсем çине пысăк ĕç тиенни. Пациентсен сывлăхне упрассине тивĕçтерсе çўллĕ шайри професси ăсталăхне кăтартма тивĕç эпир. Сывлăх сыхлавĕн сферинчи пулăшăвăн пахалăхне ўстерес ĕçе тивĕçлĕ пурнăçлама Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин правительствисем пысăк пулăшу уйăраççĕ.

Юлашки вăхăтра "Сывлăх" наци проекчĕ пирки ытларах калаçма пуçларăмăр. Чăнахах та çакă медицина пулăшăвĕн пахалăхне ўстерме май парать. Акă кăçал пирĕн пата виçĕ миллион тенкĕне яхăн медицина оборудованине кўрсе килмелле. Вĕсен шутĕнче çĕнĕ йышши флюорографи аппарачĕ те.

**– Пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕсене пысăк тимлĕх уйăрса оборудование тата ытти енĕпе пуянлатрĕç. Унта условисем кирлĕ шайра пулни уйрăмах ачасемшĕн, ватăсемшĕн меллĕ. Фельдшерпа акушер пункчĕсенче вара еплерех ларутăру?**

– Ытти районсенче вĕсен йышне тĕрлĕ сăлтавсене пула сахаллатма пуçларĕç те ĕнтĕ. Анчах та эпир пур вăй-хала пухса фельдшерпа акушер пункчĕсене сыхласа хăвармах тăрăшатпăр. Ку ĕç вара пысăк укçа-тенкĕпе çыхăннă. Вĕсен йышне паянхи шайра хăварас пулсан, кирлĕ пек ĕç условийĕсем, юсав ĕçĕсем туса ирттермелле. Кашни пункт валли лицензисем илмелле.

**– Халăх хушшинче апрель уйăхĕнчен тытăнса больницăра сипленесси укçалла пулĕ, пĕр хутчен укол тума 15 тенкĕ, система лартма 60 тенкĕ пулĕ текен сас-хура пурччĕ. Çакă чăн сăмах е суя?**

– Тўрех каламалла – суя. Паллах, эпир ун пек улшăнăва тума шутламан. Халиччен мĕнле йĕркепе сипленĕ, малашне те çаплах пулĕ.

**– Иртнĕ çул илнĕ "Васкавлă пулăшу" машинисем çĕнĕ йĕркепе ĕçлеме пуçланă-и?**

– Вăл енĕпе хатĕрлев ĕçĕсем пыраççĕ. 6 çĕнĕ машина çине рацисем лартнă. Çапла вара майĕпен республикăра компьютер управлениллĕ тĕп диспетчер пункчĕ пулмалла. Сăмахран, Муркаш больницин машини Элĕк чиккинчи яла кайнă. Çав тавраşри çул çинче авари пулнă. Компьютер тинкерекен пирĕн машина çине раципе ун пирки пĕлтерет. Çапла вара сусăрланă çынна медицинăн пĕрремĕш пулăшăвĕпе вăхăтра тивĕçтерме май килет. Çакна питĕ меллĕ тесе шутлатпăр. Аварисенче, тĕрлĕ синкерлĕхсенче шăпах вăхăтра медицинăн пĕрремĕш пулăшăвне парайманни пирки сусăрăннисен çитмĕл процентĕ патне вилсе каять. Çак çĕнĕлĕхе вара шăпах инкек-синкек вырăнĕнче пĕрремĕш пулăшу парас тĕллевпе вăя кĕртме палăртаççĕ. "Васкавлă пулăшу" машинисен шоферĕсене çавна валли "Парамедицина" курсне вĕрентсе кăлартăмăр. Вĕсен те медицинăн пĕрремĕш пулăшăвне пама пĕлмелле, кирлĕ вăхăтра врачсене тата фельдшерсене пулăшмалла.

**– Стационарсенче мĕнле çĕнĕлĕхсем пур?**

–Стационарсенче тăрăшакан медицина ĕçченĕсене медицина пулăшăвĕн юлашки кăтартăвне тĕпе хурса хавхалантарма тата панă медицина пулăшăвĕн пахалăхне кура паракан хушма тўлевсем тума палăртнă. Кунта пур специалистсем те кĕреççĕ. Çак пулăм та тăрăшарах ĕçлеме, пахалăхлă пулăшу пама хистет, апла пулсан яваплăх ўсет. Медицина ĕçченĕсен професси яваплăхĕпе тата пациентсен ирĕкĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе пирĕн условисем пур.

**– Сывлăх çинчен нумай калаçаççĕ, çыраççĕ, çапах та ытларах мĕнрен килет-ха унăн çирĕплĕхĕ, тасалăхĕ?**

– Чăвашсен каларăшĕ çирĕп сывлăха юманпа танлаштарать. Чăнах та сывă çын çеç активлă ĕçлеме, малашлăха çирĕппĕн пăхма пултарать. Сывлăх вара паян ытларах пурнăç шайĕнчен килет, ăна статистика 50 процента яхăн тесе палăртать. Вăл е ку енсем йăхран йăха куçни 20 процент, çут çанталăк тата географи тĕлĕшĕнчи условисем 20 процент тетпĕр. 10 процентĕ кăна медицина шайĕнчен килет. Урăхла каласан, сывлăх паян кулленхи пурнăçран, обществăн кашни сферинче ку тĕлĕшпе мĕнле утăмсем тунинчен килет. Çирĕп сывлăхăн тĕп шăнăрĕ вара – хамăр. Апла пулсан тĕрĕс апатланма, канма, кун йĕркине çирĕп пăхăнса пурăнма пĕлмелле. Анчах та сывлăхăн пысăк тăшманĕсем те пур. Пĕрремĕш тăшман вăл – пирус. Наркăмăшлăхне илсен ăна синиль кислотипе танлаштарма пулать. Иккĕмĕш тăшман вăл – алкоголь. Ăна хăнăхни вара – чи хăрушши. Пируспа алкоголь юн тымарĕсене пĕчĕккĕн пĕреççĕ, виççĕмĕш тăшман вара çакна питĕ хăвăрт тума пултарать. Виççĕмĕш тăшман вăл – стрессем, пусăрăнчăк кăмăл-туйăм, питĕ хытă кўренў, хаяр ăмсану, тарăху, кĕвĕçў, шикленў.

Сывлăха сыхлас ĕçре те кадрсем малти вырăнта тăраççĕ. Ку енĕпе вара ĕçсем пирĕн япăх мар. Вĕсен хатĕрленў пахалăхĕнчен, професси шайĕнчен тата медицина кадрĕсемпе эффективлă усă курнинчен килет те ĕнтĕ пирĕн медицина мĕнле пуласси.

**– Çынсем вилнин сăлтавне мĕнпе ăнлантаратăр?**

– Пĕр енчен, çынсем ватăлнипе çыхăннă çакă. Çакăнпах та пулĕ чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсемпе вилнисем ытларах. Тепĕр енĕ – вăл вăхăтсăр вилĕм кун-çула ытларах татма пуçлани, аманни, наркăмăшланни. Çавăн пекех алкоголизмпа, алкоголь психозĕпе чирлесси, алкогольпе тата наркотиксемпе иртĕхесси – сывлăха сыхлас ĕçре чуна ыраттаракан çивĕч ыйту. Эрех ĕçсе наркăмăшланнă çынсене реанимаци уйрăмне те хума тивет. Медицина ĕçченĕн вара сахал мар тăрăшма, хаклă йышши эмелсемпе усă курма тивет. Çакна ытти чирлĕ çын валли уйăрнă пулсан самай усăллă пулнă пулĕччĕ. Эрехпе иртĕхме вара никам та хистемест.

Çапах та юлашки вăхăтра районта та, республикăра та ачасем çураласси ўсрĕ, вилесси чакрĕ. Çамрăк мăшăрсем валли пирĕн çемьене планлас ыйтупа ĕçлекен пўлĕм, ача çуратмалли çуртра ачапе амăшĕн пўлĕмĕ пур. Йывăр çын хĕрарăмсене, амăшĕсене тимĕр, йод препарачĕсемпе, поливитаминсемпе тўлевсĕр тивĕçтеретпĕр. Ача çуратма паракан сертификатсем хĕрарăмсемшĕн вырăнлă пуласса шанас килет.

Сăмаха вĕçленĕ май вара пурне те Пĕтĕм тĕнчери сывлăх кунĕпе саламлатăп. Çемьере килĕшў, ĕçре ăнăçу, чи кирли çирĕп сывлăх пулччăр. Çынсем вара сахалтарах чирлеччĕр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

**Кам пултаруллăрах?**

# Маттур ачасем



Пысăк тавракурăмлă ачасен пултарулăхне палăртас тĕлĕшпе мартăн 28-мĕшĕнче районта "2007 çулхи кружковец" конкурс иртрĕ. Унта çамрăк техниксен станцийĕн тата районти ача-пăча пултарулăх çурчĕн кружокĕсене çўрекенсем хутшăнчĕç. Конкурс программи анлă та интереслĕ пулчĕ. 4-8 классенчи 11 вĕренекен "Портфолио презентацийĕ", "Айтăр-ха, паллашар" тата "Музыка палитри" конкурссенче хăйсен пултарулăхĕсене кăтартрĕ. Маттур ачасем кашни конкурсрах активлăхпа палăрчĕç.

"Çулталăкри кружоковец" конкурсри "Художествăлла эстетика пултарулăхĕ" номинацире Мăн Сĕнтĕр шкулĕнчи "Хореографи" кружокне çўрекен Ксения Кузьмина (ертўçи Е.А. Жагерова) пĕрремĕш вырăна тивĕçрĕ. Иккĕмĕш вырăна вара Нискасси шкулĕнчи "Подсолнушек" ача-пăча пултарулăх пĕрлешĕвĕн президенчĕ Мария Григорьева (ертўçи М.Н. Пушкарева) тухрĕ. Виççĕмĕш вырăна та Нискасси шкулĕнче вĕренекен тивĕçрĕ. "Мастерица" пĕрлешĕвĕнчи Екатерина Антонова (ертўçи В.С. Карпова) пулчĕ.

Техника енĕпе ирттерекен конкурсра пĕрремĕш вырăна Панкли шкулĕнчи "Техника моделированийĕ" кружока çўрекен Анна Алексеева (ертўçи И.А. Трофимова) тивĕçрĕ. Иккĕмĕш вырăна та çак шкулта вĕренекен ача тивĕçрĕ. Вăл "НТМ" кружока çўрекен Владислав Максимов пулчĕ.

Виççĕмĕш вырăна вара Анаткасси шкулĕнчи Ксения Федорова пулчĕ. Конкурса хутшăнакансене свидетельствăсем парса хавхалантарчĕç. Çĕнтерўçĕсем дипломсемпе хаклă парнесене тивĕçрĕç.

**С. ЕГОРОВА,**
**районти ача-пăча пултарулăх çурчĕн методисчĕ.**

**Ыран – Мăнкун**

# Христос чĕрĕлнĕ!



Çăварни хыççăн çичĕ эрнерен Мăнкун уявне паллă тăваççĕ. Çакă вăл чи пысăк уявсенчен пĕри пулать. Çавăнпа ăна кĕтетпĕр тата тĕплĕн хатĕрленетпĕр. Килçурт таврашне, харпăр хăйне тирпейлетпĕр. Халăхра вара Мăнкун кĕпи çĕтĕк пулсан та таса пултăр, теççĕ.

Кăçалхи çул православи тĕнĕнчисем, католиксем, протестантсем Мăнкуна пĕр кунта уявлаççĕ.

Мăнкун ыран тенĕ кас çынсем çăмарта хĕретсе чиркĕве каяççĕ те çĕрĕпех кĕлĕ итлеççĕ, пĕрле юрлаççĕ. Аслă чиркў икĕ пин çула яхăн ĕнтĕ хаклă сăмахсемпе саламласа хăй ачисене ырă сунать, хавхалантарать. Çутă ĕмĕтпе хавхаланса Христос çыннисем Мăнкун уявĕнче чиркўсене чĕрĕлсе тăнă Христоса пĕркăмăлпа мухтав юрри юрласа кĕтсе илни пурте пĕр шухăшлине, православи тĕнĕн шанчăклă ачисем пулнине кăтартать. Анчах та Христос чĕрĕлсе тăнине чĕлхепе мухтаса юрлани çителĕклĕ мар. Апла пулсан пĕр-пĕрне Турă саккунне ăнлантарса, шанăç çухатнисене тĕреклентерсе, вăрçакансем хушшинче килĕшў кўрсе, пĕр-пĕрне ўт тĕлĕшпе те ырă туса, хамăра курайманнисене кăмăлпа каçарса, çапла майпа Христос чĕрĕлсе тăнăшăн савăнса ĕçпе кăтартса пама тăрăшмалла.

Ирхи шуçăмпа килсене таврăнсан, килти турăш умне çурта çутаççĕ, кукăльçăмах пĕçереççĕ. Ачасене те таса тумтир тăхăнтартаççĕ. Мăнкуна çичĕ кун уявлаççĕ. Çав вăхăтра тăванпĕлĕшсем патне хăнана çўресси мĕн авалтанах пырать. Уяв сĕтелĕсем вара тутлă çимĕçпе тулаççĕ. Çавăнпа та ăна активмеллех теççĕ. Çапах та уявăн чи паллă çимĕçĕ хĕретнĕ çăмарта шутланать. Мăнкун сĕтелĕ хушшине тăванĕсемпе пĕрле пуçтарăнса ларса Христос чĕрĕлнĕ! Чăн чĕрĕлнĕ! тесе хĕретнĕ çăмартасене виçĕ хут хирехирĕç шаккаса çиеççĕ. Мăнкунра "Пасха" тата "Кулич" çимĕçĕсене хатĕрлеççĕ. "Пасха" – тăпăрчăран хатĕрленĕ çимĕç. Ăна ятарласа Мăнкуна валли тунă формăра сивĕ çĕрте е холодильникре хытараççĕ.

Ăна хатĕрлеме 1 килограмм тăпăрч, 3 çăмарта, 300 грамм услам çу, çур стакан иçĕм çырли, пĕр стакан сахăр песукĕ, 1 лимон е лимон кислоти (çĕçĕ вĕçĕпе илмелле), ванилин тата кăштах тăвар кирлĕ пулать. Малтан услам çупа сахăра питĕ лайăх пăтратмалла, çăмарта хушмалла. Тăпăрча 2 хут вĕтĕ ала е аш вĕтетекен машинка витĕр кăларатпăр та хатĕрленĕ массăпа хутăштаратпăр. Иçĕм çырли, ванилин, тăвар яратпăр та лайăх пăтрататпăр. Формăна шывпа йĕпететпĕр те марля хуратпăр. Унта хатĕрленĕ тăпăрчăна хуратпăр. Çиелтен пусаратпăр та 12 сехетлĕхе холодильника лартатпăр. Формăран кăларсан сĕтел çине турилккене лартмалла. Çиелтен ăна иçĕм çырлипе чечеклентерме юрать. Ытларах чухне ăна тăваткĕтеслĕ пирамида евĕр тума тăрăшаççĕ. Мĕншĕн тесен ăна Иисус Христоса пăталанă Голгоф тăвĕ пек йышăнаççĕ.

**Сăмах вăрман ĕçченне**

# Хăрушлăхран сыхланăр

Тăван çут çанталăк чĕрĕлсе ешерме пуçларĕ те çу кунĕсем пире хăй ытамне илчĕç. Епле илемлĕ тавралăх. Илем илемпе те, анчах ăна упрама пĕлес пулать! Çу кунĕсем çитнĕрен вăрмана канма тухакансем те йышланаççĕ. Вĕсем ялан майлах кăвайт чĕртни вăрманта пушар тухаслăха ўстерет. Çулленех вут-çулăм тыткăнне лекнĕ пиншер йывăç, гектарĕ гектарĕпе вăрман юрăхсăра тухать. Ăна эпир сахал мар илтетпĕр. Çавăпа та кашнийĕнех вăрмана сиен тăвассинчен, пушар тухассинчен сыхламалла. Çамрăк хыр йышши хунавсем çывăхĕнче вут чĕртмелле мар. Кирек хăш вырăнта та чĕртнĕ шăрпăка пăрахас çук, унсăрăн типнĕ çўп-çап, курăк тивсе кайма пултарать. Уйрăмах апрель уйăхĕн вĕçĕнче вут алхасас хăрушлăх пысăк. Ку вăхăтра симĕс курăк ўсме ĕлкĕреймен-ха, типпи вара темĕн чухлех. Иртнĕ çул "Нива", "Передовик", "Новая Юнга", Мичурин ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче вăрман лаптăкĕсем кĕлленнисем тĕл пулчĕç. Çакă вара правилăсене пăхăнманран пулса тухрĕ.

Акă каллех илемлĕ, вăрмана йыхравлакан вăхăтсем çитрĕç. Камăн-ха вăрман илемĕпе, кайăксен юрри-кĕввипе, шăнкăр-шăнкăр шыв сассипе киленес килмĕ? Ку вара ытларах чухне ешĕл вăрманта тĕл пулать. Паллах, кану вăхăтне тус-юлташсемпе кăвайт умĕнче ирттерес килет. Çавăнпа та ял хуçалăх вăрманĕсен Муркашри уйрăмĕнче вăй хуракансем асăрхануллăрах пулма ыйтаççĕ. Хуçалăх ертўçисен, район территорийĕнче пурăнакансен, канма килекенсен, уйрăмах çамрăксен вут-кăвар чĕртсен пĕр самантлăха та тимлĕхе çухатас марччĕ. Кăвайт айккалла сикесрен сыхă пуласчĕ. Вăрман – пирĕн пуянлăх, апла пулсан унăн ырлăхĕпе киленесчĕ. Таса сывлăша вара пушар тĕтĕмĕ ан варалатăрччĕ.

Раççей Федерацийĕн пушар хăрушсăрлăх правилисене пурин те пăхăнасчĕ, йĕркесĕрлĕхе сарăлма парас марччĕ.

**Б. ХРУСТАЛЕВ, Муркашри «Сельлесхоз».**

**Сывлăхлă пулар**

# Физкульура – сывлăх çăлкуçĕн пĕр енĕ



***Нина Арефьевна Кузнецова – Мăн Сĕнтĕрти 2-мĕш номерлĕ больницăн сывату физкультурин медсестри. Кунта ахаль тренажер, велотренажер, вибромассажер тата ытти сывлăха çирĕплетмелли оборудовани пур. Пĕлтĕр кăна уçăлнă ку уйрăма чирлисем кăмăлласах çўреççĕ, хăйсене сывалма пулăшакан медсестрана чунтан тав тăваççĕ.***

***О. СУВОРОВА сăн ўкерчĕкĕ.***